Вĕрентӳ учрежденийĕсенче

# Паттăрлăх урокĕ

Муркаш лицейĕнче çак кунсенче кадет класĕнче вĕренекенсемпе паттăр-



лăх урокĕ иртрĕ. Ăна Аслă Отечественнăй вăрçă участникне, педагогика ĕçĕн ветеранне Михаил Яковлевич Гаврилова халалланă. Вăл кăçалхи октябрĕн 20-мĕшĕнче 84 çул тултарчĕ.

Урок пуçламăшĕнче М.Я. Гаврилов биографийĕпе кĕскен истори учителĕ В.В. Федоров паллаштарчĕ. 4-мĕш гварди корпусĕн разведчиксен ротин разведчикĕ Сталинград патĕнче аманнă. Строй службине тивĕç пулман пулсан та, хăйне стройра хăварма ыйтнă. Вăл хăйĕн фронтра вилнĕ пĕртен-пĕр пиччĕшĕн – Василийшăн тăшмана тавăрасшăн пулнă.

82-мĕш стрелоксен дивизийĕн 601-мĕш автоматчиксен ротин санинструкторĕ Белоруссие, Польшăна ирĕке кăларнă çĕре хутшăннă, Берлина та çитнĕ. Ăна 3-мĕш степень «Мухтав» орденĕпе, Аслă Отечественнăй вăрçăн 1-мĕш степень орденĕпе, «Хастарлăхшăн», «Çапăçури çитĕнӳсемшĕн» тата ытти медальсемпе наградăланă.

Вăрçă хыççăн Муркаш, Юнкă шкулĕсен директорĕнче вăй хунă. 1969 çултан тытăнса пенсие тухиччен вара Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăлти вăтам шкула ертсе пынă. Вăлах шкулти А.Г. Николаев космонавта халалласа йĕркелекен музей пуçаруçи пулнă. Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ учительне М.Я. Гаврилова Ĕçлĕх Хĕрлĕ ялав орденĕпе те наградăланă. Çулленех вăл 82-мĕш стрелоксен дивизийĕн ветеранĕсен тĕл пулăвĕсене хутшăннă.

Паттăрлăх урокĕн иккĕмĕш пайĕнче М.Я. Гаврилов пирки районти тата республикăри хаçатсемпе журналсенче, кĕнекесенче пичетленнĕ çарпа патриотика тата историпе краеведени материалĕсем пирки сăмах пычĕ. Вăл шутрах Н. Аршуткинăн «Ялав» журналăн 2004 çулхи 10-мĕш номерĕнче М.Я. Гаврилов çуралнăранпа 80 çул çитнине халалласа пичетленнĕ статйи пирки те. Кунпа пĕрлех М.Я. Гавриловăн 2007 çулта пичетленсе тухнă «Шуршăлта космонавтика музейĕ мĕнле йĕркеленни çинчен» çĕнĕ кĕнекин презентацийĕ пулчĕ. Кадетсем кĕнекери сыпăксене вуласа пачĕç.

Михаил Яковлевич вара кадетсене хăй Мускаври çар парачĕсене куракансем шучĕпе хутшăнни пирки чылай каласа пачĕ, нумай сăн ӳкерчĕксем, 13 çул хушшинчи парада хутшăнмалли пропусксене, ытти интереслĕ документсене кăтартрĕ. Кайран вара вăл кадетсене лайăх вĕренӳ, чăннипех те патриотсем пулма, Тăван çĕр-шыва хӳтĕлеме тивĕçлĕ пулма сунчĕ.

Урока çавăн пекех Михаил Яковлевичăн мăшăрĕ В.Н. Гаврилова, ĕç ветеранĕ Н.Б. Борисов, Элĕк тата Муркаш районĕсен çар комиссарĕ А.Г. Прокопьев хутшăнчĕç. Хăйсен сăмахĕсенче вĕсем кадетсене таса чунлă, йĕркеллĕ, чăн-чăн çынсем пулма сĕнчĕç, малашне те çак çыхăнăва тăсса пыма кирли пирки каларĕç.

Урок вĕçĕнче унта хутшăнакансене



лицей директорĕн çумĕ В.С. Иванова лицейăн паянхи пурнăçĕ пирки каласа пачĕ, кадетсен пĕр кунхи пурнăçĕ пирки видеофильм пăхрĕç.

**В. ФЕДОРОВ,**
**Муркаш лицейĕн истори учителĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: паттăрлăх урокĕ вăхăтĕнче.**

Пирĕн спортсменсен çитĕнĕвĕсем

# Вăйлисем хушшинче палăрчĕ



Куллен вăл е ку спорт секцине тренировкăсене çӳрекенсем сывă пурнăç йĕркине мала хунинчен тата вĕсем ăна агитациленинчен тĕлĕнме те кирлĕ мар-тăр. Мĕншĕн тесен çак ĕçе çӳллĕ шайра туса пыракансем сывă ачасем пирĕн малашлăх иккенне лайăх ăнланни те кашни çыншăнах паллă. Акă юлашки çулсенче С. Черкашин йĕркелесе янă бокс секцийĕ ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăвать. Муркашра «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексне хута янă хыççăн боксерсен пĕр пайĕ çак комплекс «ачисем» пулса тăчĕç. Теприсем вара унччченхиллех район администрацийĕн вĕрентӳпе çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн воспитанникĕсем. Районти спорт пурнăçĕнче вара çак пайлану хăйне евĕр ячĕшĕн кăна, мĕншĕн тесен ачасем бокс секцине тупăшсах «Сывлăх» ФСК-на çӳреççĕ, ЧР Президенчĕ парнеленĕ рингра тĕрлĕ шайри ăмăртусене хатĕрленеççĕ. Хатĕрленеççĕ тени кунта хитре сăмах çеç мар. Спорт шкулĕнче тренировкăсем иртнĕ 15 çулхи Николай Скворцов çак кунсенче Муркаша пысăк çĕнтерӳпе таврăнчĕ.

Юпа уйăхĕн 12 – 17-мĕшĕсенче Çĕнĕ Шупашкарти Спорт керменĕнче Раççейри Профсоюзсен физкультурăпа спорт обществин тĕп канашĕ республикăн физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченне, СССР спорт мастерне Д. С. Игнатьева асăнса йĕркеленĕ ăмăртăвĕ иртрĕ. Пĕтĕм Раççейри 210 боксер хутшăннă çак ăмăртăва Муркашсем виççĕн кайрĕç. Кайрĕç те пуçа усса килмерĕç. 1993 çулта çуралнă Николай Скворцов 48 кг виçе категорийĕнче 1-мĕш вырăн çĕнсе илчĕ, Станислав Филиппов 46 кг виçе категорийĕнче ăмăртса 2-мĕш пулчĕ пулсан, çак виçерех рингa тухнă Алеша Илларионов 4-мĕш вырăна тивĕçрĕ. Ăмăрту условийĕсемпе 1-2-мĕш вырăнсене тухнисем спорт мастерĕн кандидачĕн нормативне пурнăçлама пултарнăран, Муркашри боксерсем хушшинче спорт мастерĕн кандидачĕсем иккĕн хушăнчĕç. Çак ăмăртури хастарлăхпа Николай декабрьте аслă яшсем хушшинче Сочире иртекен Раççей шайĕнчи ăмăртăва кайма путевка çĕнсе илчĕ. Кунпа пĕрлех ăна ăмăрту йĕркелӳçисем çĕнтерӳшĕн тăрăшнине хакласа ятарлă кубокпа чыслани те пирĕннисен ятне çĕклет. Ăмăрту условийĕсемпе килĕшӳллĕн Стас вара чӳк уйăхĕнче Ульяновскра кĕçĕн çулхи яшсем хушшинче иртекен РФ ăмăртăвне хутшăнма тивĕç пулчĕ.

– Мĕнре куратăр-ха ӳсĕмсен никĕсне? – ыйтрăм уйрăлас умĕн Н. Скворцовран.

– Муркаш район администрацийĕ «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексне уçни тата пире, çамрăк боксерсене, ЧР Президенчĕ паха ринг парнелени, хамăр ăсталăха туптама С. Черкашин аслă тренерпа унăн тусĕсем О. Сютрюковпа М. Николаев тренерсем пулăшни, – пулчĕ çамрăк боксерăн кĕске хуравĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**

# Как накопить на пенсию

В УПРАВЛЕНИИ ПФР – ДЕНЬ ОТКРЫТЫХ ДВЕРЕЙ

**В рамках республиканского информационного марафона «Как накопить на пенсию?» в Управлении Пенсионного фонда Российской Федерации в Моргаушском районе Чувашской Республики-Чувашии 24 октября 2008 года пройдет День открытых дверей. Всех, кому небезразличен размер будущей пенсии, приглашаем принять активное участие. Начало в 10 часов. Адрес Управления ПФР: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23 а.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства,без права строительства на нем, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:070504:67, местоположение: участок находится примерно в 130 м по направлению на юго-запад от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Шомиково, д. 1, площадью 5820 кв. м.**

**Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**Октябрĕн 23-мĕшĕнче районти Культура çуртĕнче Владимир Леонтьев концерчĕ пулать. Концерта чăваш эстрада юрăçисем тата «Голливуд» ташă ушкăнĕ хутшăнать. 18 сехет те 30 минутра пуçланать. Билет – 100 тенкĕ.**

**Продаю навесную картофелесажалку, навесную картофелекопалку, плуг на МТЗ, грабли ВСР. Адрес: Моргаушский р-н, с. Чемеево, ул. Молодежная, 12.**
**Тел.: 8-905-341-45-24.**

**Требуется домработница по ухода за слепой бабушкой (83 года) в с. Моргауши. Оплата по договоренности, достойная. Тел.: 2-14-60.**

**Продаю трехкомнатную квартиру и капитальный гараж в с. Моргауши. Тел.: 8-909-304-13-03.**

**Спутниковые антенны ТРИКОЛОР**
**с установкой, регистрацией и обслуживанием.**
**Тел.: 8-905-345-77-19. 1-10.**



**Калайкасинский «Строительный двор» реализует следующие стройматериалы: керамблоки 40х40х20 - 41 руб.; доски хвойные, березовые и липовые; жерди 6 м - 130 руб.; штакетник металлический - Н-125-10 - 40 руб. Срубы на заказ всех размеров с полной сборкой «под ключ», имеются в наличии хвойные и березовые размером 3мх3м. Металлоконструкции в ассортименте.**
**Принимает у населения картофель, металлолом.**
**Банные печи на заказ.**
**Тел.: 8-903-063-24-89, 8-906-387-86-46. 3-5.**

**КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения от пайщиков, выдает займы пайщикам. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4.**
**Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 2-13.**

**Индивидуальному предпринимателю Вязову Андрею Николаевичу требуется маляр мебельного производства. Зарплата высокая. Звонить по тел.: 2-25-74 с 8.00 до 17.00.**

**Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăх халăха урпа килограмне 6 тенкĕпе сутать. Кирлисене хуçалăх транспорчĕпе турттарса пама пултарать. 2-2.**

**Продаю блоки керамзитобетонные, щебень, щебень кирпичный, гравмассу, песок речной.Требуются рабочие для производства керамзитобетонных блоков. Продаем ячмень, пшеницу. Требуется водитель на автомашину КамАЗ-цементовоз. Тел.: 8-903-379-16-62, 8-919-666-55-77 (плодокомбинат). 3-3.**

**Продаются металлические гаражи различных размеров с доставкой и установкой в пределах района. Цена от 18 000 до 20 000 рублей. Тел.: 8-927-850-07-20. 2-2.**

**ВНИМАНИЕ!!!**
**Очень низкие цены на широкий ассортимент бытовой техники и сотовых телефонов!**
**– Холодильники и морозильники;**
**– стиральные машины;**
**– DVD-плееры и домашние кинотеатры;**
**– микроволновые печи и пылесосы;**
**– телевизоры, ЖК телевизоры;**
**– сотовые телефоны (на месте подключение на операторы связи: Билайн, МТС, Мегафон).**
**При вашем желании можно купить товары в КРЕДИТ.**
**Обращаться в салон-магазин «СИМПАТИЯ» (в здании Моргаушского рынка).**
**Контактный телефон: 2-10-80.**

Очăкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен Л.В. Иванован

**АШШĔ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38. Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 21.10.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3608.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.